13+19

ФЕДОТ ОРЛОВ
Совет Союзӗн Геройӗ

# ЮРАТАТӐП ЭПӖ ТӐВАН ҪӖРШЫВА

☆

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1943



# УМСĂМАХ

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче геройлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Чăваш çĕршывĕнче çуралса ӳссе çитĕннĕ 864 çынна Правительство орденсемпе медальсем панă; чăваш халăхĕ пăхса çитĕнтернĕ Мирон Ефимов, Федот Орлов, Борис Васильев, Геннадий Габайдулин юлташсем Совет Союзĕн геройĕсем пулса тăчĕç.

Пирĕн паттăр çинчен вырăс поэчĕ çапла çырать:

И если капитан Орлов
Летит в туманной мгле—
Его карающая тень
Проходит по земле.

Каррăнах аркатăр тăшмана, тăван халăх паттăр ывăлĕсем! Пирĕн юратнă тăван çĕршыва тытса илме, пире хăйĕн чури туса хума хапсăнакан сĕмсĕр те ирсĕр нимĕçе нимĕнле каçару та, нимĕнле хĕрхенӳ те çук!

Çак пĕчĕк кĕнекере эпир хамăр земляк—Совет Союз геройĕ майор Орлов хăй çинчен çырнă биографиллĕ çырăва пичетлесе кăларатпăр. Орловăн ячĕ пĕтĕм чăваш халăхĕн сăнарне пĕтĕçтерсе тăрать.

Çак çырăва вуласа тухсан чун хĕпĕртесе каять, тăван чăваш халăхĕшĕн, унăн паттăр ывăлĕсемшĕн савăнатăн! Вĕсен шучĕ ӳссех, ӳссех пырĕ! Орлов каларăшле, чăваш халăхĕн хăйĕн ачисемшĕн хĕрелмелле пулмĕ.

Сана, майор Орлов,—Совет Союз геройне, чăваш халăхĕн харсăр ăмăрткайăкне чыс та хисеп, мухтав та чап!

Ăрăскаллă пултăр санăн сывлăшри çулу!

Пуçран пĕр шухăш нихăçан та тухма пĕлместь. Çав шухăш вăл боевой заданисене пурнăçа кĕртсе килнĕ хыççăн кăшт сывлăш çавăрнă чухне те, сывлăшра тăвату моторлă хăватлă карапа вĕçсе пынă чухне те, ку çеç те мар, чи йывăр самантсем килсе тухнă чухне те хĕлхем пек çиçсе илет:—кам, мĕн пулнă пулăттăмши эпĕ, революци, Совет влаçĕ пулман пулсан?—тетĕп вара хама-хам. Мана Совет влаçĕ кăна ăмăрткайăкăннинчен те хăватлăрах çунатсем пачĕçке-ха. Шухăшлатăп та, куç умне иртнĕ кунсем килсе тухаççĕ.

Эпĕ Советски районри Мăн Пакăш ялсоветне кĕрекен Кĕçĕн Ямаш ялĕнче 1913-мĕш çулта çуралнă. Чи чухăн çын ывăлĕ. Аттене пачах курман. Вăл эпĕ пĕчĕк чухнех вилнĕ. Тăлăх. Ачаш курмасăрах пурăнма лекнĕ. Ыйткаласа çӳренисене, кĕтӳ кĕтнисене эпĕ халĕ те манмастăп. Выçă пурнăçпа нумай ыйткаласа çӳренĕ. Хамăр таврари ялсене—тухĕрри Чаканар-

сене, вăрманти Кăмашасене, уйри Мăн Вылăсене, çырмаллă Анат-Сăнарсене, улăхри Улăх-Кассисене пĕтĕмпех çўресе çаврăннă. Кашни пўрте кĕрсе тухнă. Хама-хам шутласа халь те вăтанатăп. Чăн та, ыйткаласа çўрени вăрă туни мар, теççĕ. Анчах никамран та нимĕнле хисеп те пулман. Ырă кăмăллă çынсем манăн выçăпа хăрса кайнă алă çине пĕр чĕлĕ çăкăр е вĕри çĕрулми хурса паратчĕç. Теприсем, куштанраххисем, эпир вĕсен чўречисем патнелле утса пынине курсан, кантăкĕсене шалтлаттарса хупса лартатчĕç. Эпĕ хам ытлашши пĕчĕкçĕ пулнă пирки Ямаш ялĕнчи суккăр Ульянана çавăтса çўреттĕм. Пыратăн çавăн пек утса, лайăх çурт куратăн, шалта темĕнле тутлă апатсем çисе ларассăн туйăнать. Çиеççĕ те пуль, кам пĕлет... Çуртăн чўречисем питĕ çўлте. Унта çитсе шалта мĕн пуррине курма çук. Эсĕ мĕскĕн сасăпа паян пурăнмалăх пĕр татăк çăкăр ыйтсан, сана е ятласа пăрахаççĕ, е кантăка уçса мăшкăлшăн çăкăр выранне кăмака чулĕ пăрахса параççĕ, е тата картишĕнчи хаяр йыттине сăнчăртан вĕçертсе, пирĕн çине вĕслетеççĕ.

Якур пиччепе иккĕн кĕтў пăхса çўрени нихăçан та асăмран тухмасть. Хучаш ялĕн, Мăн Этменĕн, хамăр ялăн уйхирĕсенче, — жаянхи

пекех астăватăп, — яланах уйра сыснасемпе, сурăхсемпе калаçса çÿреттĕм. Çуркунне, çĕршыв типсе çитсен, уя тухса каятăн та, кĕркунне кăна — татти-сыпписĕр çăмăр çуса, юр ÿкме пуçласан, яла, пÿрте кĕретĕн. Ача чухне, уйрăмах çулла, йывăрччĕ: кун вăрăм, каçĕ питĕ кĕске. Кăнтăрла выльăхсемпе кунĕпе чупса ывăнатăн та, ирхине татах ирех тăрас пулать. Сывлăм ÿкнĕ улăх тăрăх çара уран чупатăн. Урасем чĕпĕленсе, çуркаланса пĕтнĕ. Çав вăхăтра хĕвел тухать. Питĕ хитре. Петĕрсен хурăнĕ урлă хĕвел хăйĕн ылттăн урипе Ямаш енчи анасем çине пуссан, эпĕ вăрăм пушша хулпуççи çине çакатăп та, Микитасен пралукĕпе выльăхсене хăваласа, икĕ сăрт хушшипе хирелле тухса каятăп. Ирçинче вара хăвнахăвах нумай пурăнас килет тĕнчере. Мăн çын пек пулса, çĕр çине çирĕппĕн пусса утса пыратăн. Питĕ хитре ирçинче. Тĕнче илемлĕ, йăлтăртатса çеç тăрать. Çÿлте тăри юрлать, таçтан инçетрен карăш сасси илтĕнет. Анчах сана никам та пĕлмест. Пĕр выльăхсем çеç, сана пĕлнĕ пек пулса, сан хуйăхна туйнă пек пулса, мăшăлтатса çисе çÿреççĕ.

Çÿлелле пăхатăн. Унта, çÿлте-çÿлте, хăлат хăйĕн сарлака çуначĕсене сарса ирĕклĕн ярăнса

çӳрет. Вĕçен кайăк пуласчĕ те инçете-инçете вĕçсе каясчĕ тесе шухăшлатăн. Тупасчĕ хăвăн телейне. Ăçта-ши вăл? Мĕншĕн çунатсем çук-ши? Ун чухне хальхи пек çунатлă пуласси çинчен тĕлĕкре те тĕлленмен.

Халĕ те манмастăп праçниксене, çимĕксене ирттернисене. Çынсен ачисем лайăх çипуçсем тăхăнса, хуткупăссемпе, урам тăрăх хĕрачасемпе çуйăхкаласа, Шăмат еннелле, çимĕк курма, Омашне вăрманĕсем витĕр, пĕр-пĕринчен ăмăртса юрăсем юрласа каяççĕ. Эсĕ пур, тăхăнма нимĕн те çук пирки, выçлă-тутлă пулса, çынсем çимĕке кайнисене карта хушăкĕ витĕр пăхса юлатăн. Хăш чухне хăвăн пурнăçу çине тарăхнипе куççулĕсем юхса анаççĕ.

Пĕчченех хурланса çӳретĕн вара çапла. Нимĕн тума аптăранипе витре илсе, урам урлă çырмана çăл шывĕ ăсма каятăн. Çимĕкрен ăш хыпса таврăнакан ачасене сивĕ шыв ĕçтерсен мана та лайăх пек туйăнать. Эпĕ те вара çимĕке кайса килнĕ пек пулса, шыв ĕçтернĕшĕн кăмăллă ачасем тав туса парсан, хĕвелçаврăнăш кататăп.

Мăнкунсенче чуччу ярăнаççĕ. Эпĕ вара нихăçан та чуччу çине тăрса ярăнман, мĕншĕн тесен, веçех çĕтĕк-çатăк, чуччу çине тăма ма-

йĕ те çук. Тата чуччу çине тăрсан та санпа пĕрле никам та тăмасть. Е çăварнире. Ялти ача-пăча савăнса, пĕр-пĕрин патне кĕрсе хăналанса çӳреççĕ. Санăн та çӳрес килет, анчах санăн нимĕн те çук. Хăшĕ-пĕрисем санпа калаçма та тиркеççĕ.

Эпĕ яш-кĕрĕм пулсан та хам ятпа çĕлетнĕ тумтир тăхăнса курман. Яланах çĕтĕк-çатăк, выçлă-тутлă пурăннă. Сивĕ пулсан та, инçе пулсан та, вĕренме хĕлле те пурпĕрех çӳреттĕмччĕ. Вĕренес килетчĕ. Кĕркунне тырă пуçтарса, авăн çапса пĕтерсен, аран-аран çутатакан шăши куçлă краççин çутипе кĕнеке вуласа ларатăн. Урам хушшинче ачасем юрласа çӳреççĕ. Санăн та вĕсемпе пĕрле пулас килет. Хăш чухне вулани те пуçа кĕмест, ху вуланине ху та ăнланаймастăн. Вулатăн — шухăш урамра. Ача-çке-ха, юн вылятех. Темиçе хут вуласа тухатăн, çапах нимĕн те ăнланмастăн. Вара çав юрласа çӳрекен ачасем çине тарăхса, татах та хытăрах вулама тытăнатăн. Хăçан та пулин пирĕн урамра та праçник пулĕ-ха тесе ĕмĕтленсе хăвна-ху пусаратăн.

Тăван çĕршыв тăлăх ачан асапĕсене тăван анне пек туйса илчĕ. Вăл мана ӳстерсе çын

турĕ. Чăваш ачине малалла кайма аслă та çутă çул уçса пачĕ.

Юрататăп эпĕ тăван çĕршыва, хамăрăн чăваш халăхне, хам çуралнă яла, мана вĕрентнĕ учительсене, пĕрле вĕреннĕ юлташсене. Пĕтĕм чун-чĕререн юрататăп эпĕ совет влаçне, Сталин конституцине, Сталин аттене. Мана совет влаçĕ çитĕнтерсе çунатсем пачĕ. Ĕлĕк тăлăх ача пулнăскер, кĕтӳç ачи, тĕттĕм чăваш ачи— халĕ летчик-командир, Совет Союзĕн Геройĕ.

Эпĕ самолетпа 8 çул хушши вĕçетĕп. Çак сакăр çул хушшинче нумай курмалла пулчĕ. Тăван çĕршыва сĕмсĕррĕн хапсăнакан тăшмансемпе Хасанра, Халхин-Голра çапăçма тӳрĕ килчĕ. Белофинсемпе те вăрçрăм. Эстонире, Латвире, Литвара, Бессарабире пултăм. Хăш чухне шутласа ларсан хăвăнтан ху тĕлĕнетĕн. Пĕтĕм Кавказа урлă та пирлĕ вĕçсе каçрăм, Хура тинĕсрен пуçласа Мурманск патне çитиччен кашни яла тенĕ пекех веçех паллатăп. Байкал кӳлли урлă, Вăтам Ази урлă, Ташкентăн-мĕнĕн таллкишĕпех вĕçсе тухрăм. Памирăн шурă пĕлĕтрен те çӳле каякан хысакĕ урлă темиçе хутчен те вĕçсе каçма тӳрĕ килчĕ. Тинĕсрен пуçласа тинĕсе çитиччен выртать манăн çул—чăваш ачин çулĕ. Кара-Кум пуш-

хирĕнче, нихăçан та çын пулман çĕрте пултăм эпĕ—чăваш ачи.

Хамăрăн Чăваш республики урлă та вĕçсе каçрăм. Хамăн тăван ял патĕнче анса лартăм. Мана пĕрле ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ юлташсем, чи çывăх тăвансем пек, çавăрса илчĕç. Самолет кабининчен тухсан, хам вăрăм пушă сĕтĕрсе, çара уран утса çӳренĕ уйхирсем курăнса кайрĕç. Тăван çĕршыв пĕтĕмпех улшăннă. Йăрансăр уйхирте тырпул тинĕс пек хумханса выртать. Хăлхана хирте ĕçлекен хĕрсем юрланă сасă илтĕнсе кайрĕ. Акă, çак вырăнта çӳренĕ эпĕ. Çӳлте çăмăллăн ярăнса вĕçекен кайăксем çине пăхнă, ют çынсен хама хăнăхса çитнĕ выльăх-чĕрлĕхĕпе калаçнă. Чăн та, самолетран тухса, йĕри-тавра çаврăнса пăхсан, манăн кăкăра темĕн тулса килчĕ. Пĕрре ĕлĕкхи асаплă тăлăх пурнăçа аса илнипе, тепре хальхине курса савăннипе кĕçех куççулĕ шапăрах юхса анатчĕ...

Ман сире пĕтĕмпе каласа пама майĕ те çук. Пурне те пĕрле шутласан, 500 пин çухрăма ытла сывлăшра вĕçсе çӳрерĕм эпĕ — чăваш ачи. Хăш чухне 17 сехет хушши пĕр анмасăр сывлăшра пулнă. Эпĕ 6 тĕрлĕ самолет çинче вĕçме пултаратăп. Мухтанса мар, тĕрĕссине, тă-

ван çĕршыва тав туса калатăп. Хальхи вăхăтра 4 моторлă сывлăш карапĕ çинче вĕçетĕп.

Манăн учителĕм тата командирăм — Гастелло. Эпĕ унпа пĕрле ĕçленĕ. Ăна командовани урăх назначени парсан, вăл хăйĕн самолетне мана халаларĕ. Отряда, командир пулса ертсе пырасси те ман çине кусрĕ. Çапла, Гастелло самолечĕпе халĕ эпĕ вĕçетĕп. Эсир Гастелло çинчен пĕлме кирлĕ. Вăл пĕрремĕш герой. Вăрçă тухсанах, 1941-мĕш çулти июль уйăхĕнче Гастелло нимĕç танкĕсен колонни çине бомбăсем пăрахма кайсан, ăна тăшманăн снарячĕ пырса тивнĕ те, унăн самолечĕ çунма тытăннă. Гастелло, çунакансккер, хăйĕн самолетне, хăйне-хăй шеллемесĕр, танксен колонни çине çапăнтарнă. Хăй те çунса кайнă, анчах хăйпе пĕрле нумай танксене пĕтерсе, бензин цистернисене сирпĕнтерсе янă. Гастеллопа вĕçнĕ сынсем халĕ манпа вĕçеççĕ. Эпир Гастелло вилĕмĕшĕн тăшмана хаяррăн тавăрма тупа тунă, эпир таварат-пăр тăшмана. Эпир ăна пĕр хĕрхенмесĕр аркататпăр, чаплă геройăн вилĕмсĕр ятне çапла чыслатпăр.

Гастелло ячĕ пире ним курăнман тĕттĕм çĕрсенче çутă çăлтăр пек çул кăтартса пырать. Чи йывăр самантсенче Гастелло ячĕ çăмăллăх

кӳрет, чӗре вӑйӗ пӗтсе ҫитсен — чӗрене вӑй парать, хӗллехи шартлама сивӗсенче ал-урана тӑм илме тытӑнсан — юна вӗрилентерсе ӑшӑтать, ывӑнса ҫитсе куҫ курми пулсан — Гастелло чӗрин ҫулӑмӗ куҫа уҫать, вара татах та татах шыратӑн тӑшман йӑвине, тупатӑн ӑна — аркататӑн. Вилӗм куҫ умне тухса тӑрсан та Гастеллӑн вилӗмсӗр ячӗ вилӗмрен ҫӑлса хӑварать. Ӗмӗр чап та мухтав ӑна, аслӑ героя!

Эпӗ хам йывӑр бомбардировщиксен отрячӗн командирӗ. Вӑрҫӑ тухсанах 1941-мӗш ҫулти июнӗн 22-мӗшӗнче хамӑр ҫӗршывшӑн, хамӑр халӑхсемшӗн, хамӑр ҫӗрщыва сыхласа хӑварассишӗн, хамӑр телее, кунҫула, чыслӑха, ирӗклӗхе, пире ҫын тунӑ тивлете хӳтӗлесе хӑварассишӗн эпӗ нимӗҫсене хирӗҫ вӑрҫма тытӑнтӑм. Тупнӑ телее тӑшмана памалла мар! Ҫапла тупа турӑмӑр эпир. Халӗ ӗнтӗ ирсӗр тӑшманпа 16 уйӑх хушши ҫапӑҫатӑп. Ҫав вунултӑ уйӑх хушшинче эпӗ тӑшмана нумай сиен турӑм, нумай нимӗҫсене леш тӗнчене ӑсатрӑм. Эпӗ хамӑн юлташсемпе пӗрле нимӗҫсенне 93 самолет ҫунтарса ятӑм. Танксемпе автомашинӑсене 60 ытла пӗтертӗм. Нумай складсем ҫунтарса ятӑм, нумай вагонсем, паровозсем, ҫар грузӗсем — бензин, боеприпассем турттарса пыракан эшелонсене сир-

пĕнтерсе ятăм. Тăшманăн чылай хулисене аркатрăм, чугунçул кĕперĕсене, шыв урлă хывнă каçăсене, батарейăсене сывлăшалла çĕклерĕм. Пире чура тума хапсăнакан тăшмана эпĕ пĕрре те шеллесе тăмарăм. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене мĕн чухлĕ вĕлерсе пĕтернине эпĕ шутламан. Тен, пĕр пин те ытла пулĕ. Çапла пĕрре вĕçсе кайсан кăна эпĕ 132 нимĕç офицерне пĕтертĕм.

Пĕтĕмпе каласа тухма та йывăр. Ыттине вăрçă пĕтсен калаçăпăр. Çакнашкал ĕнтĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, манăн ку вăрçăри ĕçсем. Халĕ хăвăрах шутлăр, эпĕ вĕсене çавăн чухлĕ пĕтермен пулсан, мĕнле вăй пулнă пулĕччĕ вăл пире хирĕç! Нимĕçсене эпĕ татах та нумайрах пĕтерме тăрăшăп.

Эпĕ хамăн хăватлă карапăмпа 142 хутчен боевой вĕçевре пулнă. Вăтамран шутласан, нимĕçсен пуçĕсем çине 300 тонна ытла бомба пăрахнă.

Çитменнине тата эпĕ 142 хутĕнче те çĕрле вĕçнĕ. Кăнтăрла маншăн пулсан нимĕн те мар. Çĕрле вĕçме йывăр. Нимĕн те курăнмасть. Çапах шыраса тупас пулать тăшман йăвине. Çĕрле вĕçме пур летчиксем те пултараймаççĕ. Ятар-

ласа вĕренес пулать. Каçхине кайăк та вĕç-мест,—пултараймасть, вĕçевçĕсем вĕçеççĕ.

Йывăрри нумай пулнă. Темиçе хутчен те ви-лĕмпе куçа-куçăн тăнă. Эсĕ вĕçсе пынă чухне, пурте сана тĕллесе тупăсемпе, пулеметсемпе переççĕ. Хăш чухне снарядсемпе пульăсем сан çумранах иртсе каяççĕ е пĕр-пĕр снарячĕ çу-рăлса та каять. Е прожекторсемпе хĕссе илсе переççĕ. Темĕнле хытă переççĕ пулсан та, те-мĕнле йывăр вилĕм çывăхрах пулсан та, çавах заданине яланах пурнăçа кĕртнĕ.

Эпĕ сире пур эпизодсене те каласа парай-мăп.

Çапла, мана пĕр аэродрома бомбăсем пăрахса аркатма задани пачĕç. Эпĕ хамăн карапăмпа çĕрле вĕçсе кайрăм. Фашистсен аэродромĕ патне çитнĕ чухне мана 9 прожектор хĕссе илчĕ. Куçа вăйлă çутă касать, приборсем çине пăхма та çук. Анчах эпĕ тытнă çулран пăрăн-марăм, тӳрех аэродром тĕлне вĕçсе пытăм. Ман йĕри-тавра çутатакан пульăсем çиçеççĕ, вĕсем пурте ман ӳте шыраççĕ. Çывăхрах сна-рядсем çурăла-çурăла каяççĕ. Хама моторсем ĕçлени те илтĕнмест. Манăн экипаж çĕрелле бомбăсем тăкать, тупăпа, пулеметпа перет. Аялта пушарсем хыпса илчĕç—фашистсен са-

молечӗсем ҫунаҫҫӗ. Анчах пӗр снаряд ман карапӑн пӗр моторне тӳрех лекрӗ те, мотор ӗҫлеми пулчӗ. Ҫав вӑхӑтрах тата пульӑсем икӗ ура хушшипе штурвал ҫумӗнченех тухса кайрӗҫ. Ман реглан (пальто) витӗр шӑтарса тухрӗҫ, анчах та хама сӗртӗнмерӗҫ. Самолет пӗр моторӗ пӑсӑлнӑ пирки аялалла анма тытӑнчӗ. Темӗнле йывӑр пулсан та, эпӗ хамӑр еннелле таврӑнма тӑрӑшрӑм. Ҫапах та хамӑр аэродрома вӗҫсе ҫитеймерӗм. Фронт линийӗнчен 8 километр хамӑр енне каҫса, хамӑн аманнӑ карапӑма ҫӗрле, нимӗн ҫӗмӗрмесӗр, уй варрине антарса лартрӑм. Самолета юсаса ҫак вырӑнта пӗр талӑк ытла ӗҫлемелле пулчӗ. Нимӗҫсем хайхи ҫавна сиссе тупӑпа, минометсемпе пеме пуҫларӗҫ. Темӗнле хытӑ печӗҫ пулсан та, ҫавах машинӑна юсаса ҫитерсе, хамӑрӑн аэродрома вӗҫсе кайрӑм. Ҫак каҫхине эпир тӑшманӑнне 7 самолетне ҫунтарса янӑ.

Экипаж черетлӗ вӗҫеве тухма хатӗр. Улӑп пек пысӑк карап вӑрмантан анлӑ площадка ҫине ерипен шуса тухать. Экипажӑн членӗсем хӑйсен вырӑнӗсене йышӑнаҫҫӗ. Стрелоксем пулеметсене тӗрӗслеҫҫӗ; борт-радист радио йӗркелет; борт-техниксем винтсемпе моторсене тӗрӗслесе пӗтереҫҫӗ, бомбӑсем вырнаҫтарнӑ люк-

сене пăхса тухнă, листовкăсем тултарнă михĕсене меллĕрех вырнаçтараççĕ.

Сигнал ракети. Йывăр машина уй тăрăх чупса кайрĕ. Çĕртен уйрăлсан, вĕтлĕх вăрман çийĕпе аялтан вĕçсе, ерипен çĕкленсе пырса, хĕвеланăçнелле, фронт урлă, тăшман тылне çул тытрăмăр. Пирĕн пĕрремĕш задани—тăшманăн Р. пунктĕнчи аэродромне çапса аркатасси.

Пăч тĕттĕм. Анчах кайран, эпир çитес çĕре çитнĕ чухне уйăх тухмалла, вăл пире аэродрома тупма пулăшмалла.

Çамрăк штурман Милостивенко карап çулне кăтартса пырать. Вăл 46 хутчен çапла çĕрле çул кăтартса пынă, анчах нихçан та çулран аташман.

Вăл тек-текех компаспа карттă çине пăхса пырать. Вăхăта, хăвăртлăха, самолет мĕн чухлĕ çӳлте пынине тĕрĕслет. Унтан вăл курс линейки çинчи пĕр пункта хыттăн шаккать:

— Ы-ых, ирсĕрсем!—тет вăл.

Аялта, тĕттĕм çĕре çурса çулăм ялтлатса хыпăнса илни курăнса каять. Татах, унтан тата. Фронт линийĕ. Ку вăл пирĕн артиллери хăйĕн çĕрлехи ĕçне тăвать, çĕре чавса выртнă тăшмана хире-хире кăларать.

Уйăх çути вăйсăр. Вăл ноябрь каçĕн тĕттĕмлĕхне çĕнтерейместь.

— Тĕллев патне çитесси тăхăр минута юлать,—тесе пĕлтерет штурман.

Эпир çывхарса пынине тăшман сисет. Тĕттĕм пĕлĕте прожектор çути вăрăм çĕçĕ пек çурса каять. Кĕрен те хĕрлĕ çиçĕмсем çиçме тытăнаççĕ. Анчах çутатакан пульăсем те, прожекторсем те пирĕн самолета тĕттĕмре хыпашласа тупаймаççĕ.

Эпир цель çийĕнче, 1000 метр çӳллĕшĕнче. Пирĕн айра хула хĕрри—аэродром. Унта—пирĕн мирлĕ хуласемпе ялсене аркатма хатĕрленсе ларнă çăхансем.

Милостивенко бомбăсем тăкма тытăнать. Пирĕн „кавăнсем" пĕрин хыççăн тепри аялалла вăркăнаççĕ, машина ерипен чĕтренсе илет.

Çĕр çинче хура çулăмсем хыпăнаççĕ, унтан çуталса, ӳссе пыраççĕ. Тăшманăн самолечĕсем çунаççĕ. Вĕсем хăйсене хăйсем çутатса пире лайăх курма май параççĕ. Ултă самолет хыпăнса илнĕ.

Çак каçхине эпир тăшман çине тăвата хутчен вĕçсе кайма шут тытрăмăр. Ачасем манăн маттур, ывăнма пĕлмеççĕ. Нимĕçе мĕн чухлĕ ытларах хĕнеççĕ, манăн паттăрсем те çавăн

чухлĕ хастарланса пыраççĕ. Хамăрăн аэродром çинче пире самолета черетлĕ вĕçеве тухма часах хатĕрлесе параççĕ.

Çапла эпир пĕр каçра тăвата хутчен тăвата тĕле вĕçсе кайса тăшмана аркатрăмăр. Ирхине пирĕн часть командованийĕ пирĕн ĕç çинчен хыпарсем илнĕ. Эпир çав каçхине тăшманăнне 30 самолет таран пĕтерсе тăкнă, ангарсене çунтарса янă, самолетсем лармалли площадкăсене тарăнăн сухаласа пĕтернĕ.

Çапла пĕр каçра тăшмана виçшер-тăватшар хутчен тапăннисем сахал мар пулнă.

Пĕринче тата, юханшыв урлă каçма хатĕрленсе, пухăнса тăнă тăшмана нимĕн юлмиччен çапса аркатнă хыççăн, хамăр аэродром патне тавăрăнтăм та ларма шутларăм. Анчах ларма май çук. Йĕри-таврах, аэродромран инçех те мар, тăшман самолечĕсем вĕçеççĕ. Эпĕ кунта анса ларсан, тăшман хама та курса илет, хамăрăн çĕр çинче пытанса тăракан машинăсемшĕн те ырă мар ĕç тăватăп. Тăшман асăрхаса илме пултарать.

Эпĕ вара аэродромран аяккарах вĕçсе кайса, ăçта та пулин урăх вырăна анса ларма шут тытрăм. Анчах кĕрхи каç часах йĕп чиксен те курăнми тĕттĕмленсе çитрĕ. Çитменнине тата

пётём тавралăха йывăр пĕлĕт хупăрласа тăрать. Эпĕ анма тытăнтăм, çĕр хăвăрт сывхарса пырать, анчах пĕлĕтсем ăшĕнчен тухма çук. Кун пек чухне шуйттан пуçĕ çине пырса тăрăнма та пулать. Самолета татах çӳлелле çĕклерĕм. Мĕн тăвас? Наставлени тăрăх командир кун пек чухне çапла та тума пултарать: экипажа парашютсемпе сикме приказ парать те, юлашкинчен хăй те парашютпа сикет, унтан вара машинăна ӳксе çĕмĕрĕлме тăлăха хăварать. Анчах манăн юратнă учитель Гастелло пилчесе хăварнă машинăна, боевой ĕçре нихăçан та улталаман чи çывăх туса епле çавăн пек тăвас-ха, епле ӳксе çĕмĕрĕлме тăлăха хăваратăн-ха ăна? Çук, апла тума юрамасть.

Пуçра сасартăк пĕр шухăш çуралчĕ.

— Сикме хатĕрленĕр!—терĕм эпĕ хамăн юлташсене.— Çĕр çине анса çитсен, самолета лартмалăх вырăн хăвăрт шыраса тупăр та, мĕн те пулин çутса паллăсем лартăр.

Юлташсем мана часах ăнланчĕç. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри тĕттĕмелле шăвăна-шăвăна анчĕç. Эпĕ çав вырăн тĕлĕнче темиçе хут çаврăнса илтĕм. Горючи тепĕр темиçе минутлăха кăна çитет. Акă аялта çутăсем курăнса кайрĕç. Тек сывлăшра пĕр минута та тытăнса тăма юра-

масть. Эпӗ çунакан çутӑсем тӗлнелле анма тытӑнтӑм. Ялкӑшса çунакан пӗрремӗш кӗлте патӗнче ман машинӑн ураписем çӗре тиврӗç те тепӗр кӗлте патне çитесси икӗ утӑм юлсан машина чарӑнчӗ. Моторсем те ӗçлеме пӑрахрӗç— баксенче бензин пӗр тумлам та юлман. Çапла „У—2“ самолет кӑна анса ларма пултаракан тӑвӑр вырӑна эпӗ хамӑн тӑватӑ моторлӑ караппа анса лартӑм. Юлашки кӗлтерен виçӗ утӑм лерелле тарӑн вар пулнӑ.

Çапла вара экипажа та, машинӑна та çӑлса хӑварма пултартӑм.

Нимӗçсем пӗр вырӑнта наступлени пуçласа ярас тесе, танксемпе машинӑсем нумай пухса тӑратнӑ. Мана вӗсен планне çӗмӗрме задани пачӗç. Уйрӑмӑн илсен, манӑн пӗр станцине пырса çитнӗ бензин цистернисен эшелонне çунтарса ямалла пулнӑ. Эпӗ яланхи пекех бомбӑсем çӗклесе, çав станцине аркатма вӗçсе кайрӑм. Унта мана тӑшман кӑмӑллӑ мар кӗтсе илчӗ. Анчах нимӗçсем темӗнле урса кайса печӗç пулсан та, эпӗ задание çапах пурнӑçа кӗртрӗм, çав эшелона пӗтӗмпех çунтарса аркатрӑм, питӗ вӑйлӑ пушарсем турӑм, тата хӑрамалла çӳлте вӗçрӗм, анчах çӗр çинчи пушарсенчен машина ӑшӗнче те çап-çутӑ пулчӗ.

Ирчченех çунчĕ нимĕç моторĕсен юнĕпе чунĕ. Эпĕ бензина çунтарса янине пула, пирĕн пехотинецсем нимĕçсен горючисĕр тăрса юлнă танкĕсене 60 таран тытса илчĕç. Пит лайăх ĕç пулчĕ.

Пире хирĕç вăрçма пĕр вырăна Испани салтакĕсене („Голубая дивизия" текенскерне) илсе пынă пулнă. Кăнтăрла нумай утса ывăннăскерсене, вĕсене пĕр ялта канма вырнаçтарнă. Вĕсем çывăрма выртнă. Вот мана çак нимĕçсен тусĕсене „ăса вĕрентме" задани панчĕç. Вĕсем пире пачах кĕтмен, ĕшеннĕ хыççăн вĕсем пурте тутлă ыйăха путнă. Эпĕ вара вĕсене ыйăхран вăратма, унтан ют çĕр çинче мĕнле çывăрса çўремеллине вĕрентме вĕçсе кайрăм. Ку ялтан нимĕн те юлмарĕ, веçех аркатрăм. Чылай вăхăт вĕçсе çўресе çав йĕксĕк тарçăсене хамăн мĕн пур пулеметсенчен вутпа шăвартăм. Кĕтмен хăнасемшĕн тăхлан çăмах хĕрхенсе тăмарăм. Карланкă выçă пулсан, çийĕр, тăранăр, терĕм. Тарăхатăн-çке-ха! Мĕн шырама килнĕ вĕсем пирĕн çĕр çине? Ялта нумай пушарсем пулнă. Ку салтаксенчен хăшĕ-пĕрисем, çинчех вилейменнисем, йĕмĕсене тăхăнмасăрах туха-туха чупнă. Анраса кайнипе хăш еннелле тармаллине пĕлмесĕр, нумайĕшĕ-

сем пирĕн боецсем тăракан енне вăркăннă. Тыткăна лекнисем нумай пулчĕç. Çапла вара „Сенкер те кăвак дивизирен“ шăмми-шакки кăна юлчĕ. Ку ĕçшĕн мана командовани мухтарĕ. Хамăр генерал тав турĕ. Пĕлместĕп, „кăвак дивизин“ генералĕ пит ылханчĕ пулмалла.

Акă тата тепĕр картина. 1941-мĕш çулти декабрь уйăхĕ. Н. хулинче нимĕç офицерĕсем раштав тума шутланă. Çав майпа вĕсем культура дворецне пуçтарăнса банкет тума тытăннă. Паллах, вĕсен ĕçмелли те, çимелли те çителĕклех пулнă. Офицерсем вĕт! Вĕсен сĕтелĕсем çинче пĕр япала кăна çитмен, вырăссен „тăварлă хăярĕ“ пулман. Банкет çинчен пире партизансем систерчĕç. Эпĕ хамăн „хăярсене“ çакрăм та вĕçсе кайрăм хайхи. Тивĕçлĕ çурта часах шыраса тупрăм. Паллană хула-çке-ха! Офицерсем ĕçнĕ, шавланă пулмалла. Эпĕ çав çуртăн тимĕр çийĕ витĕр офицерсен раштав сĕтелĕ çине „хăярсем“ тăкма тытăнтăм.

— Мейĕр, çийĕр!

Паллах, çуртран нимĕн те юлман. Çав касхине вара, партизансем каласа панă тăрăх, эпĕ 132 офицера леш тĕнчене ăсатнă. Пĕр сăмахпа каласан, нимĕçсем лайăх ĕçсе-çирĕç, лайăх

апатланчĕç, ирхине мухмăр чĕртес шухăшĕ те пулмарĕ пулас. Вĕсен мухмăрне „вырăс хăярĕ“ каçах уçса пачĕ. Питĕ лайăх ĕç пулчĕ вара.

Çырмалли татах та нумай. 142 хут çĕрле вĕçнĕ çĕрте кашнинчех тĕлĕнмелле ĕçсем пулнă. Пурне те çырса тухма вăхăт çук, ĕçе васкас пулать.

Хĕлле çапла мана пĕр аэродрома ватма хушрĕç. 45 градуслă сивĕре 5 сехет вĕçрĕм. Çавах задание пурнăça кĕртрĕм. Нимĕçсенне ку каçхине 6 самолетне пĕтертĕм. Анчах хамăн алăсене те тăм илчĕ, питсене, ура тупанĕсене тăм илсе ячĕ. Тӳсме çук сивĕ! Утмастăн, ларса пыратăн-çке-ха, 5 кун чирлесе выртмалла пулчĕ,—ни утаймастăп, ни алăсемпе нимĕн те тытаймастăп. Çав каçхине манăн иккĕмĕш летчикĕн сылтăм куçне пачах тăм илсе ячĕ. Мĕн тăвас тетĕн, вăрçă инкексĕр пулмасть.

Тепрехинче командованин ответлă заданине пурнăçлама вĕçсе кайсан, çанталăк йĕркесĕр начар пулнă пирки, манăн карап сывлăшра пăрланма тытăнчĕ, алла пăхăнми пулчĕ. Винтсем çинчен катăлса сирпĕнекен пăр катăксем пĕтĕм пите çĕмĕрсе пĕтерчĕç. Куççем юнпала хупланççĕ, анчах çапах та задание пурнăça кĕртсе,

чиперех таврӑнса, машинӑна йӗркеллӗн антарса лартрӑм. Экипажа та, карапӑма та ҫӑлса хӑвартӑм.

Калаҫмалли нумай. Ыттисене вӑрҫӑ пӗтсен калаҫӑпӑр.

Мӗнле вӗҫмеллисене, мӗнле бомбӑсем пӑрахмаллисене, мӗнле йывӑр пулнисене хӑвӑрах чухлама тивӗҫлӗ. Анчах ҫапах та, ҫапах та задание пурнӑҫа кӗртмесӗр ҫурма-ҫулран нихӑҫан та каялла таврӑнман.

Мана Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ, Совнаркомпа Обком салам ячӗҫ. Ҫакӑн ҫине эпӗ ҫапла ответлетӗп, тӑшмана пӗтерсе тӑкичченех ҫапӑп, чӗре тапма чарӑниччен, юлашки юн тумламӗ юлмиччен, юлашки сывлӑш тухиччен ҫапӑҫӑп нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ. Нимӗҫ самолечӗсемпе танкӗсен ванчӑкӗн купине, фрицсемпе ганссен вилӗ купине кунран-кун ытларах ӳстерсе пырӑп. Хамӑр ҫӗршывшӑн, хамӑр халӑхшӑн, хамӑн телейлӗ пурнӑҫшӑн!

Эпӗ тӑван ҫӗршыва юрататӑп, ӑна нихӑҫан та, никама та памӑп. Эпӗ Гастелло геройӑн ячӗпе тупа тӑватӑп.

Чӑваш халӑхӗн маншӑн хӗрелмелле пулмӗ. Анчах ман сӑмах ҫапла: мӗн пур ҫынсем, пӗ-

чĕккинчен пуçласа пысăкки патне çитиччен, фронтшăн ĕçлеччĕр, çапла ĕçлесе ирсĕр нимĕçе хăвăртрах пĕтерер. Вара вăрçă пĕтсен курса калаçăпăр. Вара ун чухне орденлă Чăваш республикин халăхĕ лайăх ĕçленĕ тесе пурте калаччăр.

Фронтран пысăк та хĕрӳллĕ салам сана, Тăван чăваш çĕршывĕ!

**
*

Редактор *С. А. Шумков.*

---

НТ 918. Подписано к печати 13/I-43 г. Объем 0,875 п. л.
Заказ № 843. Тираж 4000 экз.

---

Отпечатано в типографии № 1 Управл. полиграфической промышленности при СНК Чувашской АССР.
г. Чебоксары

Цена 50 коп.

ФЕДОТ ОРЛОВ

ЛЮБЛЮ СВОЮ РОДИНУ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ ■ 1943
ЧЕБОКСАРЫ